25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ДЕКАБРЬ 1 ЫТЛАРИКУН 279 (6214) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пыраççĕ

I. Сталинград районĕнче

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, унăн Дон шывĕн хĕвелтухăç хĕрринчи оборонин çĕнĕ линине татнă. Пирĕн войскăсем **Вертячий, Песковатка, Сокаревка, Илларионовский** ятлă тĕреклетнĕ пунктсене йышăнса илнĕ. Çак пунктсем вĕсем оборонăн çак линийĕ çинче нимĕçсен хирĕç тăмалли тĕп узелĕсем пулса тăнă. Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, противника хăваласа пырса, **Ермохинский, Обильное, Верхне-Курмоярская** ятлă халăх пурăнакан пунктсене тата **Небыковский** станцине тытса илнĕ.

Ноябрĕн 29-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле тыткăна илнисен хисепĕ тата 3 пин çын ÿснĕ. Ноябрĕн 19-мĕшĕпе 29-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче противникăн 66 пин салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Ноябрĕн 19-мĕшĕпе 29-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: тĕрлĕ калибрлă орудисем—2000, пулеметсем — 3.935, юсавлă тата юсавлă мар танксем — 1.379, автомашинăсем — 6 пин ытла, çар пурлăхĕ тиенĕ лавсем — 4.677, лашасем — 10.700, çавăн пекех тата çар пурлăхĕн, боеприпассен, продовольствин 122 складне тытса илнĕ. Сталинград районĕнче противникăн виçĕ моторлă 72 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

II. Центральнăй фронтра

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Центральнăй фронтра, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе тата унăн пырса çитнĕ резервĕсен контратакисене сире-сире ярса, ăнăçлăн малалла куçса пынă, противникăн контратака тăвакан чаçĕсене чылай пысăк çухатусем тÿстернĕ.

Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ тата кункаçа 55 оруди, 34 пулемет, 8 танк, çар пурлăхĕн, боеприпассен тата продовольствин 15 складне тытса илнĕ. Противникăн 49 танкне пĕтерсе тăкнă е персе çĕмĕрнĕ.

Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 4.800 вилли выртса юлнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 29-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** хули районĕнче тата **Центральнăй фронтра**, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пырса, малтанхи енеллех наступлени туса пынă.

Пирĕн войскăсем **Вертячий, Песковатка, Сокаревка** тата **Илларионовский** ятлă тĕреклетнĕ пунктсене йышăнса илнĕ. Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем халăх пурăнакан **Ермохинский, Обильное, Верхне-Курмоярская** ятлă пунктсене тата **Небыковский** станцине тытса илнĕ.

Иртнĕ эрнере, ноябрĕн 22-мĕшĕпе 28-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсенче тата зенитнăй артиллери пениппе нимĕçсен 234 самолетне пĕтерсе тăкнă, вĕсенчен 72-шĕ виçĕ моторлă транспортнăй самолетсем пулнă. Çав вăхăт хушшинче пирĕн 97 самолет пĕтнĕ.

* * *

Ноябрĕн 29-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 20 танкне тата войскăсемпе тĕрлĕ грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çитти пĕтерсе тăкнă, артиллерин 12 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 10 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ батальон таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград хулин çурçĕр пайĕнче противник пирĕн войскăсем тытса илнĕ рабочи поселокăн районĕнче атакăсем тунă. Пирĕн войскăсем гитлеровецсен атакисене сирсе янă тата противникăн 750 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 13 пулемет, 165 винтовка, темиçе миномет тата противотанковăй пăшалсем тытса илнĕ.

Хулан кăнтăр хĕрринче пирĕн чаçсем 300—400 метр малалла куçнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн çĕршер вилли выртса юлнă. Хĕçпăшалсемпе боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем наступленилле вăйлă çапăçусем туса пынă. Противник, контратакăсем туса, совет чаçĕсене малалла куçма чарма хăтланнă. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, вĕсене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Кункаçа тăшманăн 1.400 салтакĕпе офицерне, 13 орудине тата 90 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Нумай çынна тыткăна илнĕ. 19 оруди, 47 пулемет тата боеприпассен 2 складне тытса илнĕ. Пирĕн боецсем, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, халăх пурăнакан тĕреклетнĕ темиçе пункта йышăнса илнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйсен пĕр пайĕпе малалла куçса пынă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Ытти участоксенче пирĕн чаçсем гитлеровецсен хаяр атакисене сирсе янă. Противник питех те пысăк çухатусем тÿсет. Туллимар даннăйсем тăрăх, тăшманăн 1000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 15 танкне 20 орудине, 15 минометне, 48 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата 30 дзотне ишĕлтернĕ. Противникран 28 оруди, 200 автомашина, 500 пин снаряд, 2 миллион ытла патрон тата тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Кавалерин Н-ски соединенийĕ каялла чакакан гитлеровецсене ăнăçлăн хăваласа пырать.

Пирĕн летчиксем нимĕçсен 11 транспортнăй самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем наступленилле операцисем туса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă. Противник вăйлăн хирĕç тăрать, час-часах контратакăсем тăвать. Ржев—Вязьма чугунçулĕн районĕнче нимĕçсем çапăçăва пехотăн 2 полкне тата 50 танк кĕртсе янă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсене сирсе ярса малалла куçнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн виллисем нумай выртса юлнă. Нимĕçсен 20 танкне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра гитлеровецсем контратака тунă, анчах та, 400 салтакпа офицера çити çухатсан, каялла чакнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем противник тĕреклетнĕ пĕр высотана тытса илнĕ. Çав высотан айккисенче тăшманăн 250 вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра совет боецĕсем противникăн темиçе контратакине сирсе янă тата гитлеровецсен пĕр ротине ытла пĕтерсе тăкнă.

Хура тинĕс флочĕн летчикĕсем—гварди капитанĕсем Василенкăпа Овсянников противникăн 5 пин тонна водоизмещенилле транспортне атакăланă. Тĕл кăларса янă торпеда тăшманăн транспортне лексе ăна путарнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен отрячĕ çак кунсенче нимĕçсен пысăк карательнăй отрячĕпе çапăçнă. Партизансем пĕр вăтам танка, 5 автомашинăна, боеприпассем тиенĕ 3 лава пĕтерсе тăкнă тата 107 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Партизансен тепĕр отрячĕ противникăн 2 поездне ÿпĕнтерсе янă. Икĕ паровоз тата 20 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Крушение пула 300 гитлеровеца çити вилнĕ е аманнă.

Ноябрĕн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Ноябрĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй фронтра** малтанхи енеллех наступлени туса пынă.

* * *

Сталинград хулин заводсем вырнаçнă пайĕнче пирĕн войскăсем противник çине персе тăнă тата унăн оборонине шыраса-сăнаса çÿренĕ. Артиллерирен тата минометсенчен персе, нимĕçсен пехотине пĕр батальон таран вĕлерсе пĕтернĕ, артиллерин 3 батарейине тата 21 пулемета пĕтерсе тăкнă, 33 дзотпа блиндажа ишĕлтернĕ. Хулан кăнтăр хĕрринче Н-ски чаçăн боецĕсем çĕрле атака тунă та 12 дзотпа блиндажа гитлеровецсенчен тасатнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем, противникăн Дон шывĕн хĕвелтухăç хĕрринчи оборонин çĕнĕ линине татнă та çапăçса пырса малалла куçнă. Çĕркаçа нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Н-ски стрелковăй часть, Грановский юлташ ертсе пыракан танкистсемпе тата Глебов юлташ ертсе пыракан артиллеристсемпе пĕрле кĕрешсе, противникăн тĕреклетнĕ паха пунктне тытса илнĕ тата темиçе километр малалла куçнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла куçса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем, противникăн контратакине сирсе ярса, нимĕçсен 11 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен 200 автоматчикне ытла пĕтерсе тăкнă. Зенитнăй артиллери противникăн 3 самолетне персе ÿкернĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем халăх пурăнакан пункта йышăнса илнĕ, боеприпассем тиенĕ 50 вагона, медикаментсем тиенĕ 3 вагона, боеприпассен складне, горючи складне, продовольстви складне, 36 оруди, 50 мотоцикл, 100 велосипед тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕ тытса илнĕ.

* * *

Фронтăн центральнăй участокĕнче пирĕн войскăсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе тата вĕсен контратакисене сирсе ярса, малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем вăйлăн çапăçса нимĕçсен 7 танкне тата 350 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем противникăн опорнăй пунктне йышăнса илнĕ, 8 оруди, 14 пулемет, 3 миномет, радиостанци тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 600 вилли таран выртса юлнă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре противникăн пехотипе танкĕсем атака тунă. Любимов юлташ ертсе пыракан артиллеристсем нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тăшманăн танксем хыççăн пынă пехотине Кравцов юлташ ертсе пыракан подразделенин пулеметчикĕсем сапаласа янă. Противник, пысăк çухатусем тÿссе, хăйĕн малтанхи позицийĕсем патне чакнă.

* * *

Барановичи облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ противникăн чĕрĕ вăйне турттарса пыракан 3 поезда тата çар пурлăхне турттарса пыракан 5 поезда ÿпĕнтерсе янă. Нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ, 8 паровоз тата 82 вагон çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Сталинград облаçĕнчи Ягодный ятлă халăх пурăнакан пункта нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсен пĕр ушкăнĕ акă çакăн пирки акт çырнă: «Нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем халăх пурăнакан пунктри колхозниксене çаратса пĕтернĕ, çынсене Германие каторгăлла ĕçе хăваласа янă. 144 çуртпа хуралтăран 135-шне гитлеровецсем ишĕлтернĕ, пĕтерсе тăкнă. Нимĕç бандичĕсем пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхе пусса пĕтернĕ тата çырла сачĕсене пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем колхоза тата колхозниксене темиçе миллион тенкĕлĕх сиен кÿнĕ.

Танксен колоннине тума 22 пин тенкĕ пачĕç

ЭЛЕК. Матьăк ялсоветĕнчи ĕççынни-сем, колхозниксемпе колхозницăсем, танксен «Колхозник Чувашии» колонни-не тума 22 пин тенкĕ параççĕ. «Ударник» тата Киров ячĕпе тăракан колхоз-сен председателĕсем Платоновпа Сергеев юлташсем танксен колоннине тума 1.500-шер тенкĕ параççĕ, вăл шутран 400-шер тенкине çырăннă кунах хыврĕç. «Труд» колхозăн председателĕ танксен колоннине тума 2.000 тенкĕ пачĕ. «Ударник» колхозăн кладовщикĕ Степанов юлташ 1.500 тенкĕ, старши конюх Ефимов юлташ 800 тенкĕ, Çĕмĕрткасси колхозĕн счетовочĕ Быков юлташ 1.000 тенкĕ укçа пачĕç.

Ялсовет работникĕсем танксен колоннине тума кашниех пĕр уйăхри ĕç укçине параççĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, Матьăк ялсоветĕнчи колхозсенче танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕç анлăн сарăлса пырать. Кĕске вăхăтрах кунта 22 пин тенкĕ укçа пухнă.

С. САПЕРКИН.

Большевик-воин

Сакăр çул каярах халăх тăшманĕсем, фашизмăн троцкистла-зиновевла тарçисем ирсĕррĕн те ултавлăн персе, хурçă пек çирĕп большевика, Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлне, халăхăн çулăмлă трибунне, аслă Сталинăн чи сывăх ученикĕсенчен тата соратникĕсенчен пĕрине—Сергей Миронович Кирова вĕлерчĕç. Вĕсем пирĕн ретсене аркатса яма шутланă. Анчах та вĕсен шучĕ йăнăш пулчĕ. Ирсĕр заговорщиксене эпир вĕлерсе пĕтертĕмĕр, хамăрăн çĕршывра пиллĕкмĕш колоннăна çапса аркатрăмăр. Киров совет халăхĕн чĕринче ĕмĕрлĕхех чĕрĕ юлчĕ. Паян, Киров вилнĕ куна асăннă май, совет халăхĕ çав ывăнма пĕлмен революционерăн, патриотăн тата воинăн чаплă пурнăç çулне çĕнĕрен аса илет.

Киров нумай енлĕ талантлă çын пулнă. Хăйĕн мĕнпур таланчĕсене вăл тăван çĕршыва панă.

Совет Союзĕн нумай тĕрлĕ тăванла халăхсем пурăнакан çавтери анлă талккишĕсем Кирова курса тăнă, унăн ĕçĕсене пĕлнĕ. Пирĕн парти Кирова чи ответлă та чи хăрушă участоксене ĕçлеме янă. Вăл Кавказ тăвĕсем хушшинче те, Атăл çыранĕсем çинче те, Баку хулин вышкисем хушшинче те, Казахстан çеçен-хирĕсенче те, Нева çыранĕсем çинче те — Ленин хулинче пулнă.

Вăл çапăçнă, çĕнĕ тĕнче тунă. Вăл халăхсен туслăхне çирĕплетнĕ, халăх тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларса, аркатса пынă.

Граждăн вăрçин тăвăллă çулĕсенче Çурçĕр Кавказра вăл казаксемпе горецсене, ингушсемпе осетинсене кĕрешÿре пĕрлештернĕ, кабардинецсене, балкарецсене, дагестанецсене пĕтĕçтерсе организациленĕ. Пятигорскри съездра вăл Çурçĕр Кавказра Совет влаçĕ пулса тăни çинчен пĕлтернĕ; кăшт каярах вара, Октябрьте çĕнтерсе илнисене реакци вăйĕсенчен сыхласа хăварас вăхăт çитсен, вăл партизансен отрячĕсене организациленĕ. Шуррисем хĕснипе партизансен çав отрячĕсем тусем хушшине тухса кайнă та, унта кĕрешĕве малалла туса пынă. Тусем хушшинчи партизансем патне хĕçпăшалсем илсе пырас тесе, Киров Мускава кайнă. Вăл Кавказа пыма тухсан, унта каймалли çула тăшман татнă пулнă. Вăл вара Астрахане кайнă, унта Атăла хÿтĕлес ĕçе организациленĕ. Анчах вăл Кавказ çинчен пĕр минутăлăха та манман.

Хĕрлĕ Çарăн Кизляр патĕнчи чаçĕсемпе Дагестанри партизансем тата Бакури подпольщиксем, — вĕсем пурте Кировпа тăтăшах çыхăнса тăнă, вăл кăтартса пынă тăрăх ĕçленĕ, Кавказа шуррисен пусмăрĕнчен ирĕке кăларма хатĕрленнĕ. Паянхи пекех, унчухне те Грознăйри нефтяниксем, чеченецсемпе ингушсем, Кума тата Терек шывĕсен айлăмĕсенчи казаксем вăйлă тăшманăн атакисене сире-сире янă, тăшмана таткăлăн пырса çапас саманта кĕтнĕ. Çав самант çитнĕ.

Киров Астрахань хулинчен никам çĕнтереймин крепость туса хунă. «Астрахань крайĕнче пĕр коммунист та пулин пур чухне, Атăлăн варри советсен аллинче пулнă, вăл советсен аллинчех тата малашне те советсеннех пулĕ» текен чаплă сăмахсем Кировăн сăмахĕсем пулса тăраççĕ.

11-мĕш армие пĕтĕçтерсе йĕркелесе, ăна тăшманшăн аса та çиçĕм туса хурса, вăл унпа пĕрле çеçен-хирсемпе хăйăрлă пуш-хирсем урлă каçнă, Çурçĕр Кавказа пынă.

Вăл Бакăва ирĕке кăлармалли плана тунă. Бакăва унчухне муссаватистсем—тĕрĕк националисчĕсем тытса илнĕ пулнă. Чаплă операци туса, вăл Дербент урлă Баку патне çĕмĕрсе тухнă, нефть хулине совет халăхĕ валли ирĕке кăларнă.

Вăл Кавказ çĕрĕсем тăрăх, ирĕке тухнипе хавхаланнă халăх хушшипе пынă; çынсем иртнĕ саманан хура кунĕсене часрах манччăр тесе, арканса пĕтнĕ ялсемпе аулсем мирлĕ те пуян пурнăçпа часрах пурăнма тытăнччăр тесе, вăл мĕн кирлине пурне те тунă. Кавказри нумай тĕрлĕ ăрусем ăна чи çывăх туссем пек, хăна туса кĕтсе илнĕ. Çулăмлă трибун, вăл тусем хушшинчи халăхсен чĕрисене тарăнăн кĕрсе вырнаçакан сăмахсем каланă. Вăл халăхсене ирĕке кăларакан Хĕрлĕ Çар çинчен, геройсем халăх телейĕшĕн тăкнă юна палăртакан Хĕрлĕ ялав çинчен каланă. Анчах унчухне Кавказа пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларман пулнă-ха. Вăл Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене никам каçайми Мамисон перевалĕ урлă, тусем урлă хĕллехи вăхăтра каçармалли хăюллă та хаяр пулман плана тăвать. Çав перевал урлă унччен никам та каçма пултараймасть тесе шутланă. Анчах та красноармеецсем хăйсен хĕçпăшалĕсемпе мĕнпур çар хатĕрĕсемпе Мамисон урлă каçса, Грузие аннă. Кавказ лешъенĕ пĕтĕмĕшпех совет çĕрĕ пулса тăнă.

Хĕвеллĕ Бакура ĕçлесе, вăл халăхсен туслăхне çирĕплетсе пынă, нефть кăларас тĕлĕшпе те, çĕрмамăкĕ пухас тĕлĕшпе те, мусульман тĕнĕн танатинче асапланакан хĕрарăма ирĕке кăларас тĕлĕшпе те ĕçленĕ, унччен пĕрпĕринпе тăшманла пурăннă грузин, армьян тата тĕрĕк халăхĕсене пĕр туслăхпа пĕрлештернĕ. Кавказри хĕрÿллĕ ĕçсем хыççăн, Атăл çинчи çапăçури кунсем хыççăн, эпир ăна Ленинградра оппозиципе кĕрешнĕ çĕрте куратпăр. 1926 çулхи февраль уйăхĕнче ирсĕр шайккăн юлашкийĕсене аркатса тăкса, Сергей Миронович аслă Ленин хулин оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе ĕçлет.

Сталинла пятилеткăсен хĕрÿллĕ çулĕсем. Вăл Ленинград хулинчен мĕнпур союзри промышленноçа аталантарса пыма, мĕнпур совет çурçĕрне чĕртсе ура çине тăратма хăватлă вăй кÿрекен центр туса хурассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. 1926 çулхи ноябрь уйăхĕнче вăл профсоюзсен губернири съезчĕн ларăвĕнче чаплă сăмах калать: «Ленинград хулипе Ленинград промышленноçĕ çĕршыва индустриализацилес ĕçре, çак хула тата Ленинградăн пролетариачĕ пирĕн аслă революцин пур тапхăрĕсенче те пысăк вырăн йышăнса тăнă пекех, пысăк вырăн йышăнса тăмалла».

Унăн сăмахĕсем пурнăçа кĕчĕç. Киров заводсем тунă кăна мар, вăл Ленинград облаçĕ мирлĕн аталанса пынине сăнаса тăнă кăна мар, Ленинградăн хăрушсăрлăхне çирĕплетес тĕлĕшпе те питех те нумай вăй хурса ĕçленĕ.

Пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ мĕнле ÿссе пынине, пирĕн чикĕсем мĕнле çирĕпленсе пынине, пирĕн çĕнĕ çар чаçĕсем мĕнле вĕренсе пынине, танкистсемпе летчиксем çĕнĕ çар техникине мĕнле алла илсе пынине, çĕнĕ боевой караплсем мĕнле ĕçе кĕнине тимлĕн сăнаса тăнă. Вăл Балтика çинчи моряксене çапла каланă: Аслă Ленин хули патне пымалли тĕп хапхан çирĕп çăра пулмалла, пĕтĕм çĕршывăн лăпкăлăхне сыхласа тăмалла, çав хапхана нимĕнле вăй та уçса пăрахма ан пултартăр», тенĕ.

Тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетессишĕн, Хĕрлĕ Çара ÿстерессишĕн вăл нумай ĕç тунă. Ĕçре вăл ывăнма пĕлмен, яланах хастар пулнă. Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче чечекленекен аслă самана патнелле утакан Совет Союзĕнчи халăхсен çĕнтерÿллĕ вăйне вăл пĕтĕм чун-чĕререн шанса тăнă. Меньшевикла ушкăнсен юлашкийĕсем кĕпĕртетекен Баку хулинче чухнех, 1920 çулта, вăл митингра çапла каланă: большевиксен партийĕ ертсе пынипе революци, хĕвел çĕре çутатнă пекех, ÿссе сарăлса пырать, тенĕ. Унтан митинга çынсенчен пĕри: хĕвел çутатман чухне тĕттĕм каç та пулни çинчен ан манăр тенĕ.

— Большевиксене хĕвел çĕрле те çутатни кирлĕ пулсан, эпир çакна та тума пултарăпăр,—тесе ответленĕ Киров.

Вăл, чăннипех те, хăйĕн вут-çулăмлă хăвачĕн çутипе нумай йышлă тăшмансене хирĕç пыракан кĕрешÿри тĕттĕм çĕрсене çутатма пĕлнĕ, вăл тăшмансен çине аçа-çиçĕм пулса тапăннă. Паян та, ырă çутăллă Кавказ тăвĕсем патне, Терек тăрăхĕнчи мирлĕ уйхирсем çине, Атăл таврашĕнчи çеçен-хирсен талккăшĕсем çине, Ленин хули патне пымалли инçетри тата çывăхри вырăнсем çине, ирĕклĕ Нева шывĕн çыранĕсем çине нимĕçсем килсе тапăннин тĕксĕм каçхи тамăкри пек кĕмсĕртетсе аннă чухне, çак çĕре тăшманăн йытă кĕтĕвĕсене вĕлерсе пыракан Совет Союзĕн шанчăклă ывăлĕсен геройла ĕçĕсем хĕвел пекех çутатаççĕ. Кировăн пурнăçне ытлашши вăхăтсăр татнă пуля татман пулсан, вăл çак чаплă геройсем хушшинче пулнă пулĕччĕ. Анчах унăн ячĕ пирĕн боецсене тăван çĕршыв чапĕшĕн, тăван çĕршывăн чылăхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре паттăрла çĕнĕ ĕçсем тума хавхалантарса çĕклет. Кировăн хăюлăхĕпе çирĕплĕхĕ, тавçăрулăхĕ, пурнăçа хĕрхенмесĕр кĕрешесси—большевикшăн, вырăс патриочĕшĕн кĕрешĕвĕн тĕксĕм кунĕсенче чаплă пример пулса тăрать.

Кировăн ячĕ совет халăхĕсемпе ĕмĕр тĕксĕмленми таса ят. Унăн ячĕпе паян Сталинградпа Тбилиси, Бакупа Сталинград, Астраханьпа Мурманск çыннисене çапăçăва чĕнекен йыхрав пек çĕклет. Унăн ячĕ боецсене çĕнтерÿ патне ертсе пырать.

НИКОЛАЙ ТИХОНОВ.

Юлашки сехетре

Пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пыраççĕ

I. Сталинград районĕнче

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Сталинград патĕнче, противник хирĕç тăнине сире-сире ярса, 6—10 километр малалла куçнă тата çирĕплетнĕ чылай пунктсене йышăнса илнĕ.

Ноябрĕн 26-мĕшĕпе 30-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче противник çапăçу хирне хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 20 пине çити виллине пăрахса хăварнă.

II. Центральнăй фронтра

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн войскăсем Центральнăй фронтра, противник хирĕç тăнине сире-сире ярса тата унăн пехотипе танкĕсем контратакăсем тунине сире-сире пăрахса, ăнăçлăн малалла куçса пынă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче тытса илнĕ: танксем — 17, орудисем — 37, пулеметсем — 40, складсем — 12 тата 58 танк пĕтерсе тăкнă.

Çапăçу хирне противник хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 7,500 виллине пăрахса хăварнă

СОВИНФОРМБЮРО.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Красноармеецсен художествăллă пултарулăхне кăтартнă çĕре хутшăннисене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Художествăллă пултарулăх тĕлĕшпе тунă çитĕнÿсемшĕн, çак ĕçре творчествăллă пуçарулăх кăтартнăшăн тата республикăри çар чаçĕсемпе граждăнла халăх хушшинче лайăх ĕçленĕшĕн красноармеецсен художествăллă пултарулăхне кăтартнă çĕре хутшăннисене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Алексей Иванович **Бельмасова** — красноармееца.
2. Василий Дмитриевич **Бокарева** — красноармееца.
3. Николай Степанович **Буховецкино** — старши сержанта.
4. Лолий Вячеславович **Введенские** — красноармееца.
5. Евгений Михайлович **Войцмана** — сержанта.
6. Николай Николаевич **Велкова** — командира.
7. Михаил Борисович **Вольфмана** — старшинана.
8. Надежда Петровна **Галич-Прозоровăна**.
9. Владимир Иванович **Гончаренкăна** — красноармееца.
10. Григорий Степанович **Гудкова** — старши сержанта.
11. Владимир Анатольевич **Дорягина** — красноармееца.
12. Николай Антонович **Долгополова** — красноармееца.
13. Николай Алексеевич **Дургина** — красноармееца.
14. Александра Иосифовна **Залуговскаяна**.
15. Александр Дмитриевич **Иванова** — красноармееца.
16. Анатолий Михайлович **Ионова** — красноармееца.
17. Николай Александрович **Копалкина** — красноармееца.
18. Леонид Семенович **Корнеева** — красноармееца.
19. Анатолий Михайлович **Косцов-Арские** — кĕçĕн воентехника.
20. Алексей Антонович **Левандовские** — красноармееца.
21. Николай Николаевич **Лаврова** — красноармееца.
22. Эмиль Гецнанович **Лейванда** — красноармееца.
23. Константин Михайлович **Ленские** — красноармееца.
24. Михаил Васильевич **Малыгина** — красноармееца.
25. Владимир Михайлович **Марьясина** — сержанта.
26. Александр Федорович **Медведе** — красноармееца.
27. Георгий Павлович **Мудрова** — красноармееца.
28. Владимир Николаевич **Нашатырева** — сержанта.
29. Леонид Михайлович **Никитина** — красноармееца.
30. Мария Никифоровна **Новиковăна** — курсанта.
31. Иван Никитич **Обижаева** — красноармееца.
32. Виктор Давыдович **Перлина** — красноармееца.
33. Александр Васильевич **Румянцева** — красноармееца.
34. Лидия Дмитриевна **Соколовăна**.
35. Георгий Георгиевич **Цвеленева** — красноармееца.
36. Борис Петрович **Чернышева** — красноармееца.
37. Анатолий Иванович **Шугрина** — красноармееца.
38. Евгений Михайлович **Щедрина** — красноармееца.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиум Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1942 çулхи ноябрĕн 30-мĕшĕ.

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре

Иртнĕ талăкра вăйлă çапăçусем нумай пулса иртрĕç. Противник час-часах хирĕç пыра-пыра çапать; хăйĕн резервĕсене илсе пырса, вăл пирĕн войскăсене малалла кайма чарасшăн. Апла пулсан та, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем çаплах малалла куçса пыраççĕ тата хăйсен позицийĕсене лайăхлатаççĕ. Пирĕн чаçсем противникăн уйрăм группировкисене çавăра-çавăра илеççĕ те вĕсене вăйлăн пыра-пыра çапаççĕ. Пĕр çĕре пухнă вăйсемпе пыра-пыра çапса, совет конницăпе танкĕсем противникăн çавăрса илнĕ группировкисене пĕчĕк пайсене уйăраççĕ.

Ĕнер кун уяр та сивĕ пулчĕ. Çакă пирĕн авиацие противникăн тылĕсемпе обозĕсене темиçе хутчен тапăнма май пачĕ. Самолет экипажĕсем сăнанă тăрăх, пехотăпа грузсем турттарса пыракан 50 автомобиле яхăн тата 300 лава пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, 75 лашана вĕлернĕ. Тăшман войскисем тăракан вырăна нимĕç чĕлхипе çырнă темиçе пин листовка пăрахнă. Совет истребителĕсем кункаçа тăшманăн 12 самолетне персе ÿкернĕ.

Пирĕн чаçсем тăшмана пĕр вăхăтрах темиçе енчен пыра-пыра çапни нимĕç командованийĕн планĕсене арпаштарса ярать. Фашистсем тăна кĕрсе те ĕлкĕреймеççĕ — вĕсене совет хĕçпăшалĕн хăвачĕ тепĕр тĕлтен пырса çапать.

Пĕр участокра фашистсем войскăсем нумай пухса тăратнă, çав вырăна вĕсем тăтăш минăсем хурса тухнă, танксене чармалли чăрмавсем туса пĕтернĕ. Пирĕн командовани штурм тумалли плана тĕплĕ шухăшласа хатĕрленĕ. Пĕр енчен наступлени тăвакан чаçсем противникран юхакшывăн хĕвеланăç енчи çыранне тасатнă, ытти подразделенисем тăшмана хирĕç ыткăннă. Флангсенчен те, фронтран та перекен вут-çулăм айне пулса, нимĕçсем каялла, кăнтăралла чака пуçланă, пĕр укреплени хыççăн тепĕрне пăрахса пынă. Анчах пирĕн чаçсем вĕсен тылне те кĕрсе кайнă. Пирĕн войскăсем çавăрса илнĕ çирĕп ункă нимĕçсене хĕстернĕçемĕн хĕстерсе пынă. Хирти çулсемпе резервсем илсе пыма май пĕтсе ларнăпа пĕрех пулнă. Противникăн транспортнăй самолетсемпе усă курма тивнĕ, анчах вăл самолетсем те пысăк сиен кураççĕ. Çапăçу хаярланса кайнă. Тăшман пĕтĕм вăйне пухса хирĕç тăрать. Атакăсем штык вĕççĕн тăрса çапăçнипе вĕçленеççĕ. Пирĕн боецсемпе командирсем пысăк хастарлăхпа мастерлăх кăтартаççĕ. Красноармеец Шацкин нимĕçсен блиндажне кĕрсе кайнă та фашистсене автоматпа пере-пере вĕлернĕ. Нимĕçсем тарма тытăнсан, вăл вĕсем пăрахса хăварнă миномета илнĕ те таракан нимĕçсем çине пеме тытăннă. Сержант Зотов хăйĕн миномечĕпе тăшманăн окопĕсен сывăхнех илсе пынă та минăсене питĕ тĕл ярса тăнă. Тăшман хăраса ÿкнĕ. Нимĕçсем хăйсен хÿтлĕхĕсене васкасах пăрахса хăварнă.

Малалла куçса пыракан чаçсен пуçĕнче коммунистсем пыраççĕ. Нимĕçсем контратака тунă. Пĕр батальонри парти бюровĕн секретарĕ, «Фашистсене вилĕм, тăван çĕршывшăн!» тесе кăшкăрса, хăй пуринчен те малтан малалла вăркăннă. Противникăн контратакине вара сирсе янă, противника пысăк çухатусем тÿстернĕ. Подразделени командирĕ — старши лейтенант Аксенов, пирĕн танксем малалла кайнипе усă курса, хăйĕн подразделенийĕпе пĕрле малалла ыткăннă та высотана йышăнса илсе унта тĕрекленсе ларнă. Батарея командирĕ Шепелюк лейтенант пилĕк минута хушши персе тăрса тăшманăн пĕр взвод таран пехотине сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă тата противникăн противотанковăй орудийĕпе станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă.

(«Правда», ноябрĕн 30-мĕшĕ).

Фронта пулăшасси вăйланчĕ

ЧКАЛОВСКОЕ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Районри ĕççыннисем Сталин юлташăн доклачĕпе приказне тимлĕн вĕренеççĕ. Районри партипе совет тата комсомол активĕ, çак историллĕ документсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе колхозсенче докладсемпе калаçусем ирттерет. Çулпуçăн доклачĕпе приказне вĕренесси Совет Информаци Бюровĕ пĕлтерекен савăнăçлă хыпарсемпе пĕрле килсе тухрĕ. Çулпуçăн сăмахĕсемпе тата Хĕрлĕ Çар Сталинград хули районĕнче тунă чаплă çĕнтерÿсемпе хавхаланса, колхозниксемпе колхозницăсем пĕр çын пек пулса, хăйсен пĕтĕм вăйхалне, ĕçри пултарулăхне фронта пулăшнă çĕре пама тупа тăваççĕ.

Ноябрĕн 26-мĕшĕ тĕлне районри ĕççыннисем танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума 510.000 тенкĕ укçа пухнă. Çак ĕç валли «Маяк» колхоз членĕсем 32.000 тенкĕ, «Красное знамя» колхоз членĕсем 34.000 тенкĕ, Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 24.000 тенкĕ пухса панă. Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума колхозниксене ĕç кунĕсем тăрăх валеçсе памалли фондран 100 пин тенкĕ укçа хывни çинчен пĕлсен, «Çăлтăр» колхоз членĕсем çак ĕç валли 22 пин тенкĕ пухнисĕр пуçне ĕç кунĕсем тăрăх валеçмелли фондран татах 50.000 тенкĕ панă, хăйсен примерне йышăнса илме районри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе каланă. Кун хыççăн «РОКК» колхоз членĕсем танксен колоннине тума 73.000 тенкĕ хывнă.

А. НАГМАНОВА,
ВКП(б) райкомĕн пропагандисчĕ.

Планран иртнерсе продукци туса кăларчĕç

Сталин юлташăн доклачĕпе приказне сÿтсе-явнă хыççăн Н-ски завод коллективĕ ноябрь уйăхĕнчи производство программине срокчен тултарма сăмах панăччĕ. Коллектив хăйĕн сăмахне пурнăçа кĕртрĕ: уйăхри программăна ноябрĕн 29-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Ноябрĕн 30-мĕшĕнче заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем планран иртнерсе продукци туса кăларчĕç.

Цехсен ăмăртăвĕнче иртнĕ уйăхсенчи пекех Кинабургский юлташăн цехĕ малта пырать. Ноябрьти задание унăн цехĕ срокчен 4 кун малтан тултарчĕ.

ĂМĂРТУ РЕЗУЛЬТАЧĔ

Шупашкарти тир-сăран завочĕ ноябрь уйăхĕнче хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетнĕ. Сталин юлташăн докладне сÿтсе-явнă хыççăн рабочисем хушшинчи социализмлă ăмăртăва вăйлатнă. Чылай рабочисемпе работницăсем яланхинчен хастарлăрах та тухăçлăрах ĕçleме пуçланă. Атă-пушмак цехĕнчи стахановка Афанасьева юлташ, виçĕ профессипе ĕçлесе, сменăри нормăна кашни кун 300 процент тултарать. Фронтран аманса таврăннă Аникин, вăрçă кунĕсенче ĕçleме кĕнĕ Токарева юлташсем ĕç тухăçлăхĕ те нормăпа палăртнинчен 2 хут тухăçлăрах. Пĕтĕм коллектив çавăн пек хастарлăн ĕçленипе пула завод иртнĕ уйăхри производство планне ноябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне 97,6 процент тултарнă.

Комбинатăн çĕнĕ çитĕнĕвĕ

КУСЛАВККА, ноябрĕн 30-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Сталин юлташăн доклачĕпе хавхаланса тата Хĕрлĕ Çарăн фронтри çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, комбинат коллективĕ çĕнĕ çитĕнÿ турĕ: ноябрьти производство программине ăнăçлăн тултарчĕ. Комбинатри уйрăм цехсенчен Пушкин, Симонов, Дружинин тата Калашников юлташсен цехĕсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсем уйăхри заданисене срокчен тултарчĕç. Пушкин цехĕ, сăмахран, плана срокчен 10 кун малтан тултарчĕ. Цех коллективĕ комбинатăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне хăйĕн аллинчен вĕçертмест.

Н. ПЕТРУЧЕНКО,
Комбинатри партбюро секретарĕ.

Завод коллективĕ çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн кĕрешет

ÇĔМĔРЛЕ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Паланри катка-пичке тăвакан тата хăма çуракан завод октябрь уйăхĕнчи программăна 103 процент тултарнă. Рабочисем кăна çителĕклĕ тесе шутламаççĕ. Сталин юлташăн докладне сÿтсе-явнă хыççăн завод коллективĕ ку уйăхра тата тухăçлăрах ĕçleме пулчĕ. Унăн обязательстви çапла: ноябрь уйăхĕнчи программăна 105 процентран кая мар тултармалла, ĕç тухăçлăхне планпа пăхнинчен 10 процент ытларах ÿстермелле, продукцин хăйне ларакан хакне 10 процент чакармалла, çунтармалли, сĕрмелли материалсене тата электроэнергие 5 процент перекетлемелле.

Илнĕ обязатльствăсене пурнăçлас тесе рабочисем халĕ ăмăртăва сарса ячĕç. Кашниех вĕсем, конкретнăй обязательствăсем илсе, пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ, панă сăмаха начар мар пурнăçласа пыраççĕ. Столярнăй цехри стахановецсем Алексей Воробьев, Кузьма Грезин, Абрам Гравин хăйсен ĕç нормисене куллен 150—200 процент, бондарьсем Павел Салыгинпа Александр Гаврюшин 150 процентран кая мар тултараççĕ.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе юлашки вăхăтра хĕрарăмсем пример кăтартаççĕ. Рамщиксем пулса ĕçлекен Анна Лепнева, Татьяна Горбушкина, Надежда Кузьмина юлташсем кĕске вăхăт хушшинчех хăйсен специальноçĕсене вĕренсе çитрĕç. Иртнĕ уйăхра вĕсем нормăсене 110—120 процент тултарчĕç.

— Сталин юлташăн чаплă сăмахĕсем пире тата тухăçлăрах ĕçleме хавхалантараççĕ. Эпир хамăра панă заданисене срокчен тата лайăх пахалăхпа пурнăçлама пулатпăр,—теççĕ заводри стахановецсем.

Çак кунсенче коллектив çĕвĕ çĕлекен мастерскойри рабочисене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ.

Х. ЛИСИН.

Вылявсемшĕн укçа тÿлеççĕ

ЭЛĔК. **(Хамăр корр.).** Районри ĕççыннисем государство кăларакан заемсене çулсеренех пысăк хаваслăхпа кĕтсе илсе çыранаççĕ. Кăçалхи çул районри перекет касси ĕççыннисен заем облигацийĕсене тĕрĕслессине лайăхлатна. Кăçал ноябрь уйăхне çитнĕренпе перекет касси колхозниксемпе служащисене выляса илнĕ облигацисем тăрăх 3.560 тенкĕ выляв укçи тÿленĕ. Вăл шутран райцентрта ĕçлекен А. юлташ икĕ облигаципе 950 тенкĕ, колхозница Н. юлташ 700 тенкĕ выляса илнĕ. Вĕсем Военнăй Заема та чылай суммăлăх çыранса, укçине çийĕнчех тÿлесе татнă.

Кусемсĕр пуçне укçа-тенкĕпе япаласен лотерейи тăрăх районри ĕççыннисем 5 пин тенкĕлĕх тĕрлĕрен япаласем тата укçан выляса илнĕ. Писĕп ялсоветне кĕрекен Урпаш колхозĕн членĕ К. 500 тенкĕ выляса илнĕ.

Ют çĕршывсенче

Хĕрлĕ Çар Сталинград районĕнче наступлени туни çинчен ют çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

Англия

«ВĂРÇĂ ПУÇЛАННĂРАНПА ТУНĂ ЧИ ЧАПЛĂ ОПЕРАЦИ»

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем Сталинград патĕнче малалла куçса пыни çинчен Англи хаçачĕсем нумай çыраççĕ.

«Дейли геральд» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Сталинград фронтĕнче совет войскисем контрнаступлени тунинчен питех те пысăк результатсем пуласса кĕтме пулать. «Çакă питех те паллă,—тет хаçат:— Сталин наступлени планне питĕ тĕплĕн тата питĕ тĕрĕс туса хатĕрленĕ. Вăл лăпкăн ĕçленĕ. Противника Сталин хăй меллĕрех тесе шутланă вăхăтра пырса çапнă, çавăнпа та вăл противника ăнран ямаллах пырса çапма пултарнă. Çак питех те чаплă операци наступлени пуçламăшĕ çеç пулса тăрать пуль-ха, çав наступлени вăл союзниксен ĕçне каламе çук нумай пулăшĕ. Сталинăн генийĕ çак операцие мĕнле тумаллине шутласа хатĕрлесе çитернĕ, Сталинградăн оборони вара ăна пурнăçа кĕртме май тупнă».

«Дейли мейл» хаçат çапла çырать: «Çакă уçăмлăрах та уçăмлăрах пулса тăрать: вырăссен Сталинград районĕнчи наступленийĕ вăрçă фронтĕнче тунă ии чаплă операцисенчен пĕри пулса тăрать. Çав операци вăл нумайччен хатĕрленĕ хыççăн тунă операци пулса тăрать. Халĕ вырăссем хăйсен ĕçĕсен тивлетне кураççĕ. Нумай вăхăт хушши хирĕç тăни çеç хальхи вăйлă наступление пуçласа яма май панă».

США

«ГИТЛЕР СТАЛИНГРАДА ПЫРСА ТАПĂННИ ПĂЧЛАНСА ЛАРНĂ».

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем Сталинград районĕнче малалла куçса пыни çинчен Америка хаçачĕсем çаплах нумай çыраççĕ. «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйĕн вăрçă обозревателĕн—Элиос майсăрăн статьине пичетлесе кăларнă. Элиос çапла çырать: «Хĕрлĕ Çар чаçĕсен наступленине питĕ лайăх хатĕрлесе хурса çав тери чаплăн пурнăçа кĕртеççĕ. Нимĕçсем пысăк çухатусем тÿсрĕç ĕнтĕ. Германин Донпа Атăл хушшинчи районри армийĕсемшĕн питех те йывăр лару-тăру пулса тăнă курăнать. Нимĕçсен Сталинграда хупăрласа илнĕ войскисен пысăк пайне çапса аркатаççех пуль. Хĕрлĕ Çар Дон шывĕн тури пайĕпе Воронеж районăнче вăйлăн хирĕç тăни çак юлашки событисемшĕн питĕ паха пулса тăчĕç. Верховнăй командовани питех те чаплă çĕнтерÿ тунă. Вăл хăйĕн резервĕсене меллĕ вăхăт килсе çитиччен тытса тăнă, унтан вара вĕсемпе, вĕсем ăçта чи нумай усă пама пултарнă, çавăнта усă курнă».

«Рипабликен» хаçат (Массачузетс штачĕ) çапла кăтартса парать: нимĕçсем хăйсен войскисене Сталинград патĕнчен илсе каймасан—вĕсемшĕн катастрофа пулать. Паллах ĕнтĕ, Гитлер Сталинграда пырса тапăнни пăчланса ларнă.

Швеция

«ТĔНЧЕ ИСТОРИЙĔНЧИ ЧИ ВĂЙЛĂ ÇАПĂÇУ»

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Совет войскисем Сталинград районĕнче малалла куçса пыни çинчен хаçатсем нумай çыраççĕ.

«Эребру Куририен» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла калать: Сталинградшăн пыракан çапăçу «тĕнче историйĕнчи чи вăйлă çапăçу пулса тăчĕ», тет.

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Тунисри войскисем тĕнĕл держависен хĕçпăшаллă вăйĕсем хирĕç тăнине сирсе янă, вĕсем халь Тунисран 10 мильăра çеç тăраççĕ. Союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе пĕрле француз войскисен чылай пысăк соединенийĕсем те çапăçаççĕ. Союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсене питĕ нумай танк пулăшса пынă тата авиацин пысăк отрячĕсем хÿтĕлесе пынă.

КАСАБЛАНКĂНА ÇĔНĔ ВĂЙСЕМ ПЫРАÇÇĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Касабланкăна кулленех Америка самолечĕсен çĕнĕ эскадрильисем пыраççĕ. Ноябрĕн 28-мĕшĕнче Касабланкăна войскăсен çĕнĕ ушкăнĕсем аннă. Кунсăр пуçне, унта продовольстви нумай пырса тăрать.

ФРАНЦИ ЛЕТЧИКĔСЕМ ÇУРÇĔР АФРИКĂРА СОЮЗНИКСЕНЕ ПУЛĂШАÇÇĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Мароккăра Француз летчикĕсем пур, вĕсене генерал Лаулль ертсе пырать. Вĕсем Çурçĕр Африкăри сывлăшри çапăçусенче союзниксем енче çапăçаççĕ. Франци авиацийĕн Мароккăри групписем хушшинче Лафаиетт эскадрильи пур (вăл унта 1940 çултанпа тăрать) тата ноябрĕн 9-мĕшĕнче Марсельрен вĕçсе килнĕ вăтам бомбардировщиксен группи пур.

ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИН ЧЛЕНĔСЕМ СОЮЗНИКСЕМ ДАРЛАНПА ÇЫХĂНУ ТЫТНИНЕ КРИТИКĂЛАÇÇĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, парламентăн темиçе членĕ, çав шутра лейборист Энъюрин Бивен тата консерватор Роберт Бутби, общинăсен палатине союзниксем Дарлан адмиралпа çыхăну тытнине вăйлăн критикăлакан резолюци тăратнă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви илнĕ хыпарсем тăрăх, бомбардировщиксен пысăк отрячĕ ноябрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Туниса тапăннă.

Ноябрĕн 28-мĕшĕнче тата ноябрĕн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Голландири, Бельгири тата Германири чугунçулсемпе товарнăй поездсем çине бомбăсем пăрахнă.

Тулонри ĕçсем çинчен тĕплĕнтерех калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви Тулонри ĕçсем çинчен тĕплĕнтерех пĕлтерет: Германин бронетанковăй чаçĕсем Тулон портне ирхине 5 сехетре пырса кĕнĕ. Германи офицерĕ де Лаборд адмирала Франци флотне Лаваль правительстви панă инструкци тăрăх çийĕнчех Германин тинĕç-çар комиссийĕ аллине пама хушнă. Çав офицер çакна асăрхаттарнă: Германин артиллерийĕпе йывăр бомбардировщикĕсем хатĕр тăраççĕ, французсем карапсене путарма тытăнсанах, е вĕсене портран илсе тухма хăтлансан е тата мĕнле те пулсан хирĕç тăма хăтлансан — çав артиллерипе бомбардировщиксем çийĕнчех ĕçе тытăнаççĕ, тенĕ. Офицер çапла хушнă: кашни çар карапĕ Лавалĕн приказне пурнăçа кĕртме килĕшни çинчен 10 минута хушшинче сигнал флагĕ кăларса тăратса пĕлтертĕр, апла тумасан Германи артиллерийĕпе бомбардировщикĕсем «çийĕнчех ĕçе тытăнĕç», тенĕ.

Де Лаборд çапла ответленĕ: француз карапĕсем хăйсене тытса илме хăтланакана кирек кама та перĕç, тенĕ, вара карапсен экипажĕсене хăйсен карапĕсене путарма приказ панă. Темиçе карап портран тухса кайма хăтланса пăхнă, анчах нимĕç бомбардировщикĕсем çавăнтах бомбăсем пăрахма пуçланă. Ирхине 10 сехет тĕлне Тулон портĕнчи флот пĕтсе ларнă. Де Лаборда тата Тулонри французсен тинĕç-çар офицерĕсене арестленĕ.

ФРАНЦИ ФЛОЧĔ МĔНШĔН ТУЛОНРАН ТУХСА КАЙМАН

ЛОНДОН, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: Тулонра тăнă карапсенчен чи пысăккисем ремонтра пулнипе портран тухса каяйман. Ытти карапсенчен те нумайĕшĕ тинĕсе тухма хатĕр пулман: вĕсен экипажĕсен йышĕ çителĕклĕ пулман, артиллеристсем пулман, сывлăшран пырса тапăнассинчен хÿтĕлес ĕçе нимĕн чухлĕ те организацилемен. Германи самолечĕсем портран çывăхра ларнă, вĕсем карапсем портран тухма тытăнсанах вĕсем çине бомбăсем пăрахма пултарнă. Нимĕçсем шыва магнитлă минăсем пăрахса тултарнă. Кунсăр пуçне тата флотăн горючи те çителĕклĕ пулман.

ФРАНЦУЗСЕН ТУЛОНРИ ФЛОЧĔН СОСТАВĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Францин Тулонра тăнă флотĕнче çакăн пек карапсем пулнă: 3 линкор, 4 йывăр крейсер, 3 çăмăл крейсер, пĕр авианосец, 25 эсминец, 26 подводнăй лодка т. ыт. те.

Германия Швецарие ультиматум панă

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Бернри ют çĕршыв çыннисем çапла калаççĕ: Германия Швейцарирен Германи войскисемпе çар материалĕсене Швейцари урлă унăн чугунçулĕсем тăрăх турттарма ирĕк пама ыйтнă.

Германи хаçачĕсем юлашки вăхăтра Швейцарие ытларах вăрçса çырма пуçланă.

Румынире халăхсем иккĕленни, тата тарăхни ÿссе пырать

СТАМБУЛ, ноябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни хаçачĕсем Румыни халăхне «хăвăра-хăвăр çирĕп тыткалăр» тесе чĕнеççĕ.

«Вяца» хаçат çапла çырать: юлашки вăхăтра Румынире «çынсем вăрçă ыйтăвĕсене питĕ нумай тата хĕрÿллĕн сÿтсе яваççĕ», «çав дискуççисенче хĕрÿленсе кайнă çынсем ытла та хăюллă шухăшсем калаççĕ», тет. Çав хаçат каланă тăрăх, «пĕтĕм çĕршыв тăрăх тĕрлĕ хыпарсем сарăлаççĕ, çынсем вăрçă хăçан пĕтесси çинчен калаççĕ, часах хĕрÿленсе кайса хăйсен нервисене хавшатаççĕ». Румынсен фашистла хаçатне çавă питĕ пăшăрхантарать, вăл румынсене каламасăр тăма чĕнет. «Румынсен,—тесе çырать хаçат,—тĕнчери сложнăй ыйтусемпе интересленме кирлĕ мар. Таллашма тытăнакан тата нумай шухăшлакан çын вăл юрăхсăр ĕç тăвать. Таллашни вăл сиен кăна кÿрет, мĕншĕн тесен вăл шанманлăха пораженчество сарать, çаксем вĕсем уйрăмах та халăхи вăхăтра хăрушă пулса тăраççĕ». Юлашкинчен хаçат румынсене «чăтса тăма тата калаçмасăр тăма» чĕнет, мĕншĕн тесен «малалла тата йывăртарах кунсем пулаççĕ, тата çĕнĕ асапсем тÿсмелле пулать», тет.

ИСПАНИРЕ МОБИЛИЗАЦИЛЕМЕ ШУТЛАНĂ ÇЫНСЕН ПĔР ПАЙНЕ ÇЕÇ МОБИЛИЗАЦИЛЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Испанире çара 1938, 1939 тата 1940-мĕш çулсенче илмелле пулнă çынсене çара чĕннине халь пăрахăçа кăларнă. Халĕ çара 1940 çулта илмелле пулнисене çеç илеççĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ КАУНАСРИ УНИВЕРСИТЕТА ХУПНĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем Каунасри университета хупнă, ăна вĕсем «çав университетăн профессорĕсемпе студенчĕсем Германие хирĕç шухăш-кăмăллă» пулнă пирки хупнă.

КĔСКЕН

Эквадор правительстви Канадăра дипломатиллĕ мисси тума йышăннă. Куранччен Канадăпа Латинла Америкăри çĕршывсенчен Аргентина, Чили тата Бразили çеç дипломатиллĕ çыхăну тытса тăнă.

* * *

Германин подводнăй лодкисем Атлантика океанĕн кăнтăрти пайĕнче Бразилин «Лагес» тата «Озорио» ятлă грузовой парохочĕсене путарнă. Бразилин вăрçă пуçланнăранпа 21 судно пĕтнĕ.

* * *

Францин Анкарари посольствин пĕрремĕш секретарĕ Бертран, Турцири француз легионĕн председателĕ Казалонга тата французсен Турцири Гавас-ОФИ агентствин директорĕ Кло çапăçакан Франци енне куçнă.

* * *

Пĕрлешÿллĕ Штатсен Атлантика çыранĕнче Возард заливĕпе Вайньярд проливĕнче оборона-тинĕс районĕ тăваççĕ. Ятарласа ирĕк памасăр суднăсен çав района кĕме юрамасть. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Харьковский ЭЛЕКТРОТЕХНИЧЕСКИЙ ИНСТИТУТ,
возобновляющий свою деятельность в гор. ЧЕБОКСАРАХ,
об'являет набор студентов на I курс на факультеты:

1. Электромеханический с специальностями: электромашиностроения; электроаппаратостроения; электрооборудование промышленных предприятий; и
2. Электроэнергетический с специальностями: центральные электрические станции; электрические сети и линии.

В институт принимаются все граждане СССР в возрасте от 17 до 35 лет, имеющие среднее образование.

Заявления о зачислении в институт принимаются с 1-го декабря по 31-е декабря и подаются на имя директора с приложением: а) автобиографии; б) аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике); в) справки об отношении к воинской обязанности—для военнообязанных; г) трех фотографических карточек (снимки без головных уборов); д) паспорта (пред'является лично).

Обучение в институте с отрывом от производства.

Начало занятий—1-го февраля.

В текущем учебном году институт общежитием не обеспечивает.

Прием заявлений и справки по вопросам приема производятся приемной комиссией института в помещении средней школы № 6—угол ул. Розы Люксембург и ул. Чернышевского, ежедневно (кроме воскресенья) с 12 часов дня до 8 часов вечера.

Дирекция.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 9—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн 3—99. ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 9—23.

НТ 11918

Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.